28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
СЕНТЯБРЬ
22
ШАМАТКУН
184(6935)№

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

Партиллӗ пропаганда ӗҫне вӑйлатсах пымалла

Пирӗн парти марксизм-ленинизм теорине яланах чи пысӑк вырӑна хурса хаклать, хамӑрӑн халӑха Ленин—Сталин идейисене вӗрентсе пынӑ, партипе совет кадрӗсене, хамӑрӑн совет интеллигенцине общество аталанӑвӗпе политикӑлла кӗрешӗвӗн законӗсем ҫинчен вӗрентнипе хӗҫпӑшаллантарса пынӑ.

Этемлӗх историйӗ халиччен курман вӑрҫӑра—Германи фашизмӗпе Японии агрессорне хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑра Ленинпа Сталинӑн аслӑ вӗрентӗвӗ пирӗн совет халӑхӗн чи ҫивӗч те хӑватлӑ хӗҫпӑшалӗсенчен пӗри пулчӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пирӗн парти идеологи ӗҫне пӗр самантлӑха та вӑйсӑрлатмарӗ. Партиллӗ пропагандӑпа политикӑллӑ агитаци ӗҫӗ ҫӗнӗ формӑсемпе, ҫӗнӗ меслетсемпе пуянланчӗ. Партипе совет кадрӗсем, пирӗн интеллигентсем, кӑткӑс та йывӑр ӗҫсем туса пынипе пӗрлех, хӑйсен политикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерсе пырассишӗн ҫине тӑрса ӗҫлерӗҫ. Мӗншӗн тесен вӗсем аслӑ ҫулпуҫ Сталин юлташӑн ҫак кӑтартӑвӗсене яланах асра тытнӑ: «Государство тата пирӗн ӗҫӗн кирек хӑш отраслӗсенчи работниксен те политикӑллӑ пӗлӗвӗ тата марксистла-ленинла ӑнланулӑхӗ мӗн чухлӗ ҫӳллӗрех, ӗҫ хӑй те ҫавӑн чухлӗ ҫӳллӗрех те ӑнӑҫлӑрах, ӗҫӗн результачӗсем те ҫавӑн чухлӗ пысӑкрах, тата тепӗр майлӑ та—работниксен политикӑллӑ пӗлӗвӗ тата марксистла-ленинла ӑнланулӑхӗ мӗн чухлӗ каярах, ӗҫре те ҫавӑн чухлӗ нумайрах чӑрмавсем тата ӑнӑҫсӑрлӑхсем пулма пултарассӗ, работниксем ҫавӑн чухлӗ вак-тӗвекленсе тата деляга-крохоборсем пулса кайма, ҫавӑн чухлӗ вӗсем пӑсӑлса кайма пултарассӗ» (Сталин).

Идеологи ӗҫӗ—нумай енлӗ ӗҫ. Анчах ҫак ӗҫӗн тӗп никӗсӗ—партиллӗ пропаганда, хамӑрӑн кадрсене марксизм-ленинизм теорийӗпе хӗҫпӑшаллантарасси пулса тӑрать. Чылай районсенчи парторганизацисенче юлашки вӑхӑтра пропаганда ӗҫне вӑйсӑрлатни, ӑна кулленхи политика ыйтӑвӗсем тӑрӑх тӑвакан лекцисемпе тата докладсемпе улӑштарма пӑхни палӑрать. Уйрӑмах ҫуллахи вӑхӑтра парти райкомӗсем, пропаганда ӗҫне сӳрӗклетсе, агитаци ӗҫӗшӗн «ытларах тӑрӑшассӗ». Районсенчи ертсе пыракан хӑшпӗр работниксем—«ҫуллахи хӗрӳллӗ ӗҫ тапхӑрӗнче вӗренме вӑхӑт ҫук» тесе ӳпкелешессӗ. Ҫапла пропаганда ӗҫӗнче сезонлӑх, кампанилӗх пулса тӑрать.

Большевизм теорине тӑтӑшах, ҫине тӑрса вӗренсе пыман руководитель е агитатор ӗҫре вак-тӗвекленсе каяс, «деляга-крохобор» пулса каяс хӑрушлӑх умӗнче тӑрать. Вӑл хӑй умӗнчи кулленхи ӗҫсене, ҫӗр шывпа тӗнчере пулса иртекен событисене Ленинпа Сталинӑн аслӑ идейисемпе ҫыхӑнтарса пыраймин, ҫав идейӑсен ҫутипе ҫутатса параймин пулса тӑрать, ҫавна пула вара уп умӗнчи кулленхи ӗҫсем те «вак-тӗвекленсе», партипе совет государствин ӗҫӗсенчен татӑлса каяссӗ.

Пирӗн аслӑ ҫулпуҫсем Ленинпа Сталин, большевиксен партийӗн паттӑр деятелӗсем темӗнле йывӑр самантра та, патша тӗрминче те, каторгӑра та коммунизм теорине тӑтӑшах вӗренсе, малалла аталантарса пынӑ. Хӑйсем вӗреннипе пӗрлех вӗсем марксизм теорийӗн вӑйхӑвачӗпе ӗҫсыннисене хӗҫпӑшаллантарнӑ. Аслӑ ҫулпуҫсен ҫав примерӗ пире паянхи ӗҫре кӗрешӳре тата вӗренӳре хавхалантарса пыма тивӗҫлӗ.

Партиллӗ вӗренӳ ӗҫӗнче пирӗн «организациллӗ тапхӑрсем», «пуҫарусем» вӗҫӗ-хӗррисӗр тӑсӑлса пырассӗ. Час-часах ҫапла калаҫнине илтме пулать: «Эпир харпӑр-хӑй тӗллӗн вӗренессине йӗркелерӗмӗр», «эпир политшкул организацилерӗмӗр», «эпир парти историне вӗренме тытӑнтӑмӑр». Ҫаплах организацилессӗ, анчах чӑн-чӑн вӗренӳ ҫук. Е тата нумай чухне ҫапла каласӗ: «Эпир парти историйӗн кӗске курсне хамӑр тӗллӗн вӗренетпӗр, тӑваттӑмӗш сыпӑка ҫитрӗмӗр, анчах ку сыпӑк питӗ йывӑр», тессӗ. Нумайӑшӗсем ҫак тӗле ҫитессӗ те чарӑнассӗ. Вӗсене теори тӗлӗшӗнчен лайӑх вӗренсе хатӗрленнӗ юлташсем те, лекторсемпе консультантсем те вӑхӑтра пулӑшмассӗ. Пирӗн философи ыйтӑвӗсемпе, диалектикӑлла материализмпа историллӗ материализм ыйтӑвӗсемпе лекцисем пачах та пекех пулмассӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ нумай юлташсем парти историйӗн тӑваттӑмӗш сыпӑкӗ ҫинче «такӑнса», чарӑна-чарӑна ларассӗ.

Иртнӗ кӗркунне ВКП(б) Обкомӗн XX-мӗш пленумӗнче «Чӑваш парторганизацийӗнче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫ тата идеологи ӗҫӗ мӗнле тӑни ҫинчен тата ҫав ӗҫсене лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен» сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн нумай пуҫламӗш парторганизацисем ҫумӗнче—политшкулсем, райкомсемпе горкомсем ҫумӗнче парти шкулӗсем организацилерӗҫ. Шупашкарта марксизм-ленинизма вӗренмелли каҫхи университет ӳсрӗҫ. Чӑн та, ҫакӑ вӑл партиллӗ вӗренӳ ӗҫне лайӑхлатма чылай ҫӗрте пысӑк пулӑшу пачӗ. Анчах нумай шкулсем вӗҫне ҫитиччен ӗҫлемерӗҫ, хӑшпӗр ҫӗрте шкулсен ҫулталӑкри ӗҫне пӗтӗҫтерсе тухман, шкултан вӗренсе тухнисене малалла вӗренме пулӑшмассӗ, Шупашкарти каҫхи университет вара саланса каясси патнех ҫитрӗ, экономика факультечӗ саланса кайнӑ. Ҫакӑ вӑл, чи малтан, университета вӗренме илмелли принципа пӑсниччен, вӗренӳ ӗҫне япӑх йӗркеленниччен, вӗрентӳ аялти пусӑмра тӑниччен килнӗ.

Кӑҫалхи июнь уйӑхӗнче ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ «Марксизм-ленинизм теорине хӑйсем тӗллӗн вӗренекен кадрсене тата интеллигенцие пулӑшас ӗҫе лайӑхлатасси ҫинчен» решени йышӑннӑччӗ. Ҫав решение райкомсем сӳтсе-явнӑ, анчах вӗсенчен нумайӑшӗсем паянхи куна ҫитсе те ку ӗҫе кирлӗ пек йӗркелемен. Пирӗн хӑшпӗр райкомсем кашнин ӗҫне хӑйне уйрӑм пӑхса тухасса кӗтессӗ пулас. Ҫапла, Ҫӗрпӳ районӗнче интеллигенцие политикӑллӑ воспитани парас ӗҫ мӗнле тӑнине, ВКП(б) Канаш горкомӗ кадрсемпе интеллигенцин марксистла-ленинла вӗренӗвне мӗнле ертсе пынине уйрӑмшарӑн пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн ку районсенче пропаганда ӗҫӗ вӑйланни сисӗнет.

Канаш горкомӗ ҫумӗнче большевизм теорине вӗренекенсене пулӑшма 5 ҫынтан лекторсен группине организациленӗ. Харпӑр-хӑй тӗллӗн вӗренекенсем валли август уйӑхӗнче 2 лекци, теориллӗ 4 калаҫу туса ирттернӗ. Горкомпа ВРЗ парторганизацийӗ ҫумӗнчи партшкулсем кашни ытларикунах йӗркеллӗ пухӑнса пырассӗ. Ҫӗрпӳ районӗнче те хускану палӑрать. Анчах ҫак хускану вӑл ҫӳлтен кӑтартнӑ хыҫҫӑн малтанлӑха хускални кӑна пулса ан юлтӑрччӗ!

Ҫавӑн пекех юлашки вӑхӑтра Шупашкар горкомӗ ҫумӗнчи парткабинат та парти теорине харпӑр-хӑй тӗллӗн вӗренекенсене пулӑшас тӗлӗшпе лекцисем, консультацисем тӑтӑшах ирттере пуҫларӗ. Анчах нумай районсенчи парткабинетсем халӗ, уйхирте хӗрӳ ӗҫ пынӑ вӑхӑтра, хупӑ тӑрассӗ.

Колхозсенчи уйрӑм парторганизацисене илсен вара, вӗсенче вӗренӳ ӗҫӗ мар, парти пухӑвӗсем те сайра хутра ҫеҫ пулса иртессӗ. Октябрьски районӗнчи партии Сичӗпӳртри пуҫламӗш организацийӗ 2—3 уйӑх хушшинче те пӗр пуху туса ирттермен. Ӑҫта унта вӗренӳ ҫинчен калаҫмалли!

Пропаганда ӗҫне япӑхтарнине пирӗн парти тӳсме пултараймасть. Пирӗн ертсе пыракан кадрсен, пирӗн совет интеллигенцийӗн марксизм-ленинизм теорине тӑтӑшах, ҫине тӑрса вӗренсе пымалла, парти райкомӗсен тивӗҫӗ вара — ку ӗҫе чӑн-чӑнах большевикла организацилесе ертсе пырасси пулать. Ку ӗҫе йӗркелес тӗлӗшпе кӑтартусем те, литература та, опыт та ҫителӗклӗ.

Марксизм-ленинизм классикӗсен произведенийӗсем, «ВКП(б) историйӗн кӗске курсӗ», Сталин юлташӑн «Совет Союзӗн Отечественнӑй аслӑ вӑрҫи ҫинчен» ҫырнӑ кӗнеки, тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ пӗтнӗ ятпа пирӗн аслӑ ҫулпуҫ халӑха чӗнсе калани,—ҫаксем пурте пирӗн кадрсене теори тӗлӗшӗнчен вӗрентсе ҫитӗнтермелли чи кирлӗ майсем пулса тӑрассӗ. Пирӗн пропаганда ӗҫӗн пур формисемпе те, пур майӗсемпе те усӑ курмалла.

Юратнӑ Тӑван ҫӗршывӑн ҫарпа экономика хӑватне татах та ытларах ӳстерессишӗн мирлӗ аталану тапхӑрӗнче пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлеме хамӑрӑн кадрсене, мӗнпур ӗҫсыннисене Ленин—Сталин теорийӗн никам ҫӗнтереймен хӑвачӗпе хӗҫпӑшаллантарар!

РЕСПУБЛИКӐРА СЕНТЯБРӖН 20-МӖШЕ ТӖЛНЕ ГОСУДАРСТВӐНА ТЫРӐ ПАРАС ӖҪ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Тырӑ панӑ
Вӑрнар	73,4
Сӗнтӗр	63,4
Советски	63,0
Сӗнтӗрвӑрри	62,3
Шупашкар	55,2
Красноармейски	55,1
Етӗрне	54,9
Октябрьски	54,6
Ҫӗрпӳ	52,8
Калинино	52,2
Пӑрачкав	51,6
Шӑхасан	50,3
Чурачӑк	50,3
Муркаш	50,2
Ишлей	48,4
Куславкка	47,5
Елчӗк	46,0
Вӑрмар	45,9
Улатӑр	44,9
Первомайски	44,8
Комсомольски	44,5
Йӗпреҫ	43,6
Чкаловски	43,5
Элӗк	42,9
Канаш	40,8
Шӑмӑршӑ	38,0
Тӑвай	37,9
Ҫӗмӗрле	34,0
Хӗрлӗ Чутай	33,6
Кувакино	24,3

Тырӑ вырса пӗтернӗ районсем

Вӑрнар, Советски, Красноармейски, Елчӗк, Сӗнтӗр, Калинино, Элӗк, Сӗнтӗрвӑрри, Чурачӑк, Шупашкар районӗсем хыҫҫӑн сентябрӗн 21-мӗшӗ тӗлне Октябрьски, Етӗрне, Чкаловски, Ҫӗрпӳ тата Вӑрмар районӗсем тӗштырӑсене вырса пӗтерчӗҫ. Ишлей, Муркаш, Шӑмӑршӑ, Пӑрачкав районӗсем паян-ыран вырса пӗтерессӗ.

Тӗштырӑсене вырас ӗҫ ҫаплипех Кувакино, Улатӑр, Йӗпреҫ, Ҫӗмӗрле, Хӗрлӗ Чутай, Комсомольски, Канаш тата ытти хӑшпӗр районсенче юлса пырать. Кувакино районӗнче 3800 гектар, Улатӑр районӗнче 1128 гектар, Комсомольски районра 1135 гектар, Йӗпреҫ районӗнче 832 гектар, Ҫӗмӗрле районӗнче 822 гектар вырман тырӑсем шутланассӗ.

ҪӖРУЛМИ ПАРСА ТАТНӐ

Чурачӑк районӗнчи колхозсем тырӑ вырса пӗтернӗ хыҫҫӑн ҫӗрулми кӑларма тата государствӑна ҫӗрулми пама тытӑнчӗҫ. «Броневик» колхоз 283 центнер, «Прогресс» колхоз 280 центнер ҫӗрулми парса государство обязательствине тултарчӗҫ. Ҫавӑн пекех «Радио» колхоз та ҫӗрулми парса татнӑ.

Малта пыракан колхоз

СӖНТӖР, сентябрӗн 21-мӗшӗ. (Телефонпа). Ярославкӑри «Первая борозда» колхоз (председателӗ С. Антонов юлташ) кӑҫал тырпул пухса кӗртессипе малта пырать. Колхоз районра чӑн малтан тырӑ вырса пӗтернӗ. Халӗ кунӗн-ҫӗрӗн кӗлте кӳрессӗ тата авӑн ҫапассӗ. Ыраш, тулӑ тата пӑрҫа йышши культурӑсене ҫапса пӗтернӗ. Тырпул пухса кӗртес тата авӑн ҫапас ӗҫре М. Кудряшов юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать. Ҫак бригадӑри Муракина, Анотова, Поликарпова колхозницӑсем тырӑ вырнӑ ҫӗрте куллен икшер норма тултарса ӗҫленӗ, авӑн ҫапнӑ ҫӗрте те кулленхи нормӑна 120—130 процент тултарассӗ.

«Первая борозда» колхоз паянхи кун тӗлне государствӑна тырӑ памалли плана тултарчӗ. Халӗ кунта хӗрсех ҫӗртме тӑвассӗ.

Колхоз кантӑр татса ӑна ҫапса пӗтернӗ тата шыва хунӑ. **Г. МОИСЕЕВ.**

ТРАКТОРСЕМ КӖРХИ ҪӖРТМЕРЕ

Елчӗк МТС-ӗ кӑҫал тракторсемпе тумалли ӗҫсен ҫулталӑкри планне 115 процент тултарнӑ. Марков юлташ ертсе пыракан бригада хӑйӗн планне 193 процент тултарнӑ. Тырпул пухса кӗртес ӗҫ пуҫланнӑранпа комбайнсемпе 1706 гектар вырса пухнӑ. Комбайнер Андрей Ефимов 155 гектар, Алексей Павловпа Павел Чернов комбайнерсем 150-шар гектар вырса пухнӑ. Халӗ МТС-ӗн тракторӗсем пурӗ 1000 гектар ытла кӗрхи ҫӗртме сухине тунӑ. Струнков юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать. Вӑл 150 гектара яхӑн сухаланӑ. Ҫак бригадӑри тракторист Николай Порфирьев 65 гектар сухаласа хӑйӗн сменипе тумалли плана тултарнӑ.

А. ЧЕРНОВ.

Кок-сагыз кӑларассӗ

ВӐРМАР, сентябрӗн 21-мӗшӗ. (Телефонпа). «Красные Шептахи» колхоз 8 гектар кок-сагыз плантацийӗнчен 5,41 центнер, «Октябрь» колхоз 2 гектар ҫинчен 12,7 центнер кок-сагызӑн чӗрӗ тымарне пухса илнӗ. Ытти колхозсенче те кок-сагыз [illegible] кӑларассӗ.

И. КОРАБЛЕВ.

Кутузов ҫинчен калакан малтанхи документсем

ТУЛА, сентябрӗн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Область архивӗнче М. И. Кутузовӑн ҫырӑвӗсене тупнӑ. Вӑл ҫырусене Кутузов Тула губернаторне Богданова янӑ пулнӑ.

1812-мӗш ҫулхи сентябрӗн 18-мӗшӗнче янӑ ҫырура Кутузов Богданова ҫар валли васкасах 500 лаша илме хушнӑ. Тепӗр кунтан вӑл Богданов губернатора Тулӑра ополчени полкӗсем тума васкатнӑ, 2.000 лаша яма хушнӑ. Октябрӗн 14-мӗшӗнче Кутузов Богданова пӗр пин пуртӑ тата 2.000 кӗреҫе хатӗрлеме хушнӑ. Ҫырура ҫапла каланӑ: «Пуртӑсемпе кӗреҫесен запасӗсем ҫирӗп пулччӑр, вӗсене ӗҫлеме [illegible] пултӑр», тенӗ.

Наполеон Тулӑна кӗрсе кайма пултарнине курӑнма пуҫласан, Тулӑри пӑшал заводне урӑх ҫӗре куҫарса каяс ыйту тухса тӑнӑ. Бородино хирӗнчи ҫапӑҫу хыҫҫӑн ҫар министрӗ Тулӑри завода Ижевск хулине куҫарса кайма распоряжени панӑ. Анчах Кутузов хӑйӗн маневрӗ ӑнӑҫлӑ пуласса ҫирӗп шанса тӑнӑ. Ҫав маневра пула вӑл Наполеона кӑнтӑралла каймалли пур ҫулсене те питӗрсе лартнӑ. Ҫавӑнпа та Кутузов ҫар министрӗ ытларах шикленсе тӑнипе килӗшмен. Вӑл Тулӑри завода вӑхӑтсӑр урӑх ҫӗре куҫарассине хирӗҫ тӑнӑ. Губернатора сентябрӗн 19-мӗшӗнче янӑ ҫырура Кутузов ҫапла каланӑ:

«Сире шанса панӑ кӗпӗрнене хӳтӗлеме йышӑннӑ ӗҫсене ырлатӑп, анчах та пӑшал заводне урӑх ҫӗре куҫарса кайма ан шутлӑр, мӗншӗн тесен эпӗ халь йышӑннӑ маневр Тулӑна тӑшман тапӑнассӑран хӑтарать. Маролерсемпе фуражирсем кӑна пырса тухма пултарассӗ. Вӗсене эсир хӑвӑрах хӑваласа яма пултаратӑр. Сирӗн кӗпӗрнере вӑрҫӑ ӗҫӗсем мӗнле улшӑнни ҫинчен эпӗ сире пӗлтерсе тӑрӑп, ҫавсене кура эсир хӑвӑр ӗҫӗрсене туса пыма пултаратӑр».

ВОСКРЕСНИК УМӖН

250 тонна тырӑ леҫетпӗр

ЙӖПРЕҪ, сентябрӗн 21-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри «Тымар» колхоз государствӑна тырӑ памалли плана сентябрӗн 15-мӗшӗнче тултарчӗ. «Костер», «Трактор», «Путиловка» колхозсем те ҫывӑх кунсенче государствӑна тырӑ парса татассӗ. Анчах та районӑн графика пурнӑҫа кӗртес тесен тата 500 тонна тырӑ леҫмелле. Вырсарникун иртекен воскресникре эпир сахалтан та 250 тонна леҫме шутлатпӑр. Колхозсенчи лашасемпе вӑкӑрсемсӗр пуҫне, районри учрежденисемпе предприятисен 100 лашине, 7 автомашинине мобилизацилетпӗр.

«11 лет Октября» колхозӑн тыррине тракторсенчен кӑкарнӑ ятарласа тунӑ урапасемпе турттаратпӑр. Районра «Красный урожай», «Чувашия», «Ударник», Молотов тата Калинин ячӗсемпе тӑракан колхозсем уйрӑмӑнах юлса пырассӗ. Мобилизациленӗ туртӑм вӑйне пӗтӗмпех ҫав колхозсене яратпӑр.

Воскреснике ӑнӑҫлӑ ирттерес тесе, ял Совечӗпе колхоз председателӗсен, пуҫламӗш парторганизаци секретарӗсен тата ВКП(б) райкомӗпе райисполком уполномоченнӑйӗсен канашлӑвне ирттертӗмӗр. Вӗсем халӗ колхозсенче воскреснике массӑллӑн ирттерес тӗлӗшпе практикӑллӑ ӗҫсем тӑвассӗ.

А. ГИЛЯРОВСКИЙ.
ВКП(б) Райкомӗн секретарӗ.

Ӳкерчӗк ҫинче: Шӑмӑршӑ районӗнчи «Победа» колхоз председателӗ **Г. И. Концов** юлташ. Колхоза лайӑх ертсе пынӑшӑн ӑна «Ӗҫри хастарлӑхшӑн» медальпе наградӑланӑ. Вӑл ертсе пыракан колхоз районра чӑн малтан тырӑ вырса пӗтернӗ. Ыраш акнӑ вӑхӑтра хӑйӗн планне тултарнӑ хыҫҫӑн юнашарти «Кзыл юл» колхоза пулӑшса 40 гектар акса панӑ. «Победа» колхоз государствӑна тырӑ памалли ҫулталӑкри плана сентябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне тултарнӑ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Малтанхи тивӗҫе пурнӑҫланӑ

ВӐРНАР, сентябрӗн 21-мӗшӗ. (Телефонпа, хамӑр корр.). Колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсен малтанхи тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫлассӗ. Паянхи кун тӗлне районри колхозсем государствӑна тырӑ памалли плана 75 процента яхӑн тултарнӑ. Хирпуҫӗнчи «Ҫӗнтерӳ» колхоз (председателӗ П. Андреев юлташ) сентябрӗн 19-мӗшӗ тӗлне 13.692 пӑт тырӑ парса государствӑна тырӑ памалли плана тултарчӗ. Ҫавӑн пекех Вӑрманкас Шӑхальти «Большевик» тата Буденный ячӗпе тӑракан колхозсем те государствӑна тырӑ парса татрӗҫ. Паян-ыран государствӑна тырӑ парса татнӑ колхозсен шучӗ вунӑран та иртет.

Халӗ ҫак колхозсенче кунӗн-ҫӗрӗн авӑн ҫапассӗ тата кӗрхи ҫӗртме тӑвассӗ. «Большевик» колхоз 2 гектар ҫӗрулми кӑларнӑ.

ПАНӐ САМАХА ПУРНӐҪА КӖРТНӖ

Советски районри нумай колхозсем Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен тултарма сӑмах пачӗҫ. Вӗсем хӑйсен сӑмахӗсене асра тытса государствӑна тырӑ парса татрӗҫ. «Первое мая», «Красный Октябрь», «Труд», «Радио», «За коммунизм», «Сеятель», «Электросвет», «Новый быт», Ленин тата Жуков ячӗсемпе тӑракан колхозсем государствӑна тырӑ памалли плана тултарчӗҫ.

Чемей ял Советӗнчи «Сеятель» тата «Страж революции» колхозсем государствӑна обязательство тӑрӑх ҫӗрулми те парса татрӗҫ. Крупская ячӗпе тӑракан колхоз та государство умӗнче парӑмлӑ мар. Вӑл 1945 ҫулшӑн 15,6 центнер вырӑнне 19,8 центнер аш-какай, 32 килограмм вырӑнне 63 килограмм ҫӑм, 1683 ҫӑмарта вырӑнне 1.744 панӑ. Ҫавӑн пекех ҫупа брынза памалли обязательствӑсене те тултарнӑ. Этменти «Первое мая» колхоз государствӑна выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем памалли обязательствӑна пурнӑҫланӑ тата 1946 ҫулшӑн та аш-какай парса татнӑ. Ҫавӑн пекех Шемшеш ял Совечӗ кӗрекен пур колхозсем те кӑҫалхи ҫулшӑн аш-какай тата сӗт-ҫу парса татнӑ. Мӑн Чурашри «Комбайн» колхоз ҫӗрулми кӑларма тытӑнса, малтанхи ҫӗрулмине 31 центнер государствӑна леҫсе панӑ.

Я. СИГАЙ.

Государствӑна тырӑ пама васкамассӗ

ҪӖМӖРЛЕ, сентябрӗн 21-мӗшӗ. (Телефонпа, хамӑр корр.). Район государствӑна тырӑ парассипе чӑтма ҫук юлса пырать. Сентябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне район 25 процент, 20-мӗшӗ тӗлне 28,3 процент тултарнӑ. Ҫапла вара район 5 кун хушшинче те 3 процент таран кӑна ӳсӗм тунӑ. Заготзерно склачӗсем патӗнче тырӑ пама килнӗ лавсем ҫукпа пӗрех. Сентябрӗн 17-мӗшӗнче районри 7 колхоз 43,8 центнер, 18-мӗшӗнче 5 колхоз 37,2 центнер, 19-мӗшӗнче 5 колхоз 44,6 центер тырӑ панӑ. Ҫак тӗслӗхсем вӗсем районри колхозсем тырӑ пама васкаманни ҫинчен калассӗ.

Нумай колхозсем Заготзерно складне чӗрӗ тата таса мар тырӑ илсе пырассӗ. «Ударник» колхоз хӑйӗн чӗрӗ тыррине Заготзерно умӗнче типӗтме шутланӑ. «Комбинат» колхоз тасатман тырӑ тиесе пынӑ. «Борец» колхоз тырра накладнойсӑр тата ытти кирлӗ документсене йӗркелемесӗр янӑ.

Районра пурӗ те пӗр Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз ҫеҫ государствӑна тырӑ памалли плана тултарнӑ. «Комбайн» тата «Волга» колхозсем графика тултарса пырассӗ.

Районра государствӑна тырӑ парас ӗҫ ҫителӗксӗр пыни район руководителӗсене пӑшӑрхантармасть пулмалла. Кунта государствӑна тырӑ памалли графика пӑсакансене ответ тыттармассӗ. Государствӑна тырӑ памалли график—кашни колхозшӑн закон, ӑна пӑсма никама та ирӗк паман. Ҫаврӑнӑҫусӑр колхоз руководителӗсене пӗр хӗрхенмесӗр ответ тыттармалла.

Е. ВОЛКОВ.

Федоров графика пӑсать

ИШЛЕЙ, сентябрӗн 21-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри 80 колхоз тырӑ вырса пӗтернӗ. Халӗ тырӑ вырса пӗтермен 6 колхозра пурӗ те 70 гектара яхӑн вырман тырӑ юлнӑ. Тырӑ вырса пӗтермен колхозсен шутне Мӑналти Калинин ячӗпе тӑракан, Ҫӗньял Покровскинчи Киров ячӗпе тӑракан, «Активист», «Прожектор» тата ытти хӑшпӗр колхозсем кӗрессӗ. «Активист» колхоза пулӑшас тесе, Сыпайкасси ял Советӗнчи «Труд», «Ыраш» тата Свердлов ячӗпе тӑракан колхозсем ҫынсем ярса 20 гектар ытла вырса пачӗҫ.

«Ырашпулӑх» колхоз паян-ыран государствӑна тырӑ памалли плана тултарать. Колхозра октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне авӑн ҫапса пӗтерес тесе, кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлессӗ. Кунта ҫӗрулми кӑларма та тытӑннӑ, чи лайӑх ҫӗрулмине 30 центнер государствӑна леҫсе панӑ.

«Красноармеец», «Ново-Марково», «Правда», «Самолет» колхозсенче государствӑна тырӑ парас ӗҫ лайӑх пырать, вӗсем графика тултарса пырассӗ.

Анчах та районра государствӑна тырӑ памалли графикшӑн ответлӑха туйса ӗҫлемен колхозсем те пур-ха. «Коммунист» колхозра государствӑна тырӑ леҫес вырӑнне колхоз счетоводӗн М. Алексеевӑн пӳртне туртарма ниме тунӑ, унта колхозӑн 14 лашине янӑ. Ҫак кун колхоз государствӑна тырӑ паман тата авӑн та ҫапман. Колхоз председателӗ К. Федоров юлташ графика тултарассишӗн тӑрӑшмасть.

В. ГУСЬКОВ.

Комсомолецсем тырпул пухса кӗртес ӗҫре

МУРКАШ. Ярапайкасси ял Советӗнчи «Автогигант» колхозри комсомолӑн пуҫламӗш организацийӗ (секретарӗ Ю. Трофимова юлташ) тырпул пухса кӗртес ӗҫре хастарлӑн ӗҫлет. Тырӑ вырма тухнӑ малтанхи кунсенчех комсомолецсем хӑйсен ӗҫ нормине куллен 150—180 процент тултарса пычӗҫ.

Государствӑна тырӑ парас ӗҫе кунта комсомолецсем хӑйсем ҫине илнӗ. Транспорт бригадине Николай Алексеев комсомолец ертсе пырать. Бригадӑри Алексеев, Михайлов, Горбунов комсомолецсем тырӑ леҫес тӗлӗшпе кашни кун ырмисӗр ӗҫлерӗҫ. Ҫавна пула колхоз государствӑна тырӑ парса татнӑ.

Халӗ комсомолецсем авӑн ҫапнӑ ҫӗрте паха тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫлессӗ. П. Ефимов, Н. Лукина, А. Трофимова комсомолецсем нормӑна куллен 125—130 процент тултарса пырассӗ. Кӗлте турттаракан Ефимов комсомолец норма тӑрӑх 14 лав турттарас вырӑнне, кунӗрен 18—22 лав турттарать.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

ЧӐВАШ АССР АПАТ-ҪИМӖҪ ПРОМЫШЛЕННОҪӖН РЕСПУБЛИКӐРИ ХУЛАСЕМПЕ РАЙОНСЕНЧИ АПАТ-ҪИМӖҪ КОМБИНАЧӖСЕН СОЦИАЛИЗМЛӐ АМӐРТӐВӖН АВГУСТ УЙӐХӖНЧИ ИТОГӖСЕМ

Чӑваш АССР Совнаркомӗ, республикӑри хуласемпе районсенчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1945 ҫулхи август уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, **Сӗнтӗрти апат-ҫимӗҫ комбиначӗ** (директорӗ Портнов, райсовет исполкомӗн председателӗ Свешников) мала тухнине палӑртнӑ.

Сӗнтӗрти апат-ҫимӗҫ комбиначӗ 1945 ҫулхи август уйӑхӗнче продукци туса кӑлармалли плана 101,8 процент тултарнӑ, продукци туса кӑларассине июль уйӑхӗнчинчен 76,1 процент чухлӗ ӳстернӗ, тавар сутмалли плана 105,2 процент тултарнӑ. Сӗнтӗрти апат-ҫимӗҫ комбинатне Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне пама тата социализмлӑ ӑмӑртура палӑрнӑ рабочисене премилеме, комбинатри рабочисен культурӑпа пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатма планран ирттерсе перекетленӗ укҫа-тенкӗ шутӗнчен 4000 тенкӗ преми пама йышӑннӑ.

КИЕВРИ КИНОСТУДИЕ АМЕРИКӐРИ КИНОПА РАДИО ОБЩЕСТВИН ПРИЗНЕ ПАНИ

Киевра кино работникӗсен пухӑвӗ пулса иртнӗ. Пухура Киеври киностудие Америкӑри Кинопа радио обществин призне панӑ. Ку приза киностудие «Азамат кӗперӗ» ятлӑ фильмшӑн панӑ. Пухура ҫаксем пулнӑ: «Азамат кӗперӗ» повеҫне сценари авторӗ писательница Ванда Василевская, фильма лартакан Сталинла премии лауреачӗ М. Донской, «Азамат кӗперӗ» фильмра тӗп рольсене выляканӗсем СССР Халӑх артисчӗсем Н. Ужвийпа А. Бучма, кинорежиссерсем, операторсем, общество представителӗсем.

«Азамат кӗперӗ» фильма Америкӑра калама ҫук юратнӑ, ӑна курма темӗн чухлӗ халӑх ҫӳренӗ. Нью-Йорк хулинчи Бродвейри чи пысӑк кинотеатрта ҫак фильма 14 эрне хушши кӑтартнӑ. Театра яланах туп-тулли халӑх пулнӑ. Америкӑри Кинопа радио обществи «Азамат кӗперӗ» кино-картинӑна 1944 ҫулта кӑларнӑ кинофильмсенчен чи лайӑххи тесе йышӑннӑ, ҫавӑнпа та Киеври киностудие приз памалла тунӑ. (ТАСС).

ПЛАСТМАССӐРАН ТУНӐ ЯПАЛАСЕМ

Главхимпласт завочӗсем пластмассӑран янкар вазӑсем, илемлӗ чернильницӑсем, кӗрен турилккесем, кӑвак подноссем, тӳмесем, турасем тата ытти тӗрлӗ япаласем ҫӗнӗрен туса кӑларма тытӑннӑ. III-мӗш кварталта ҫав предприятисем II-мӗш кварталтинчен 47 процент ытларах продукци туса кӑларассӗ. Туса кӑларакан продукцин ассортименчӗ те чылай пысӑкланнӑ.

Владимир хулинчи завод пластикатран арҫынсем, хӗрарӑмсем тата ача-пӑчасем валли босоножкӑсем туса кӑларма тытӑннӑ. Ҫулталӑк пӗтиччен 60.000 мӑшӑр босоножка туса кӑлармалла.

Ленинградри комбинат целлулоидран портсигарсем, турасем, супӑнь хумаллисем туса кӑларма тытӑннӑ. Унтах целлулоидран пуканесемпе теттесем тӑвассӗ.

«Карболит» завод фенопластран электричество хатӗрӗсем, чернильницӑсем тата ытти япаласем тума тытӑннӑ. Кунсӑр пуҫне кунта органически кантӑкӑн юлашкийӗсенчен илемлӗ чернильницӑсем, тӳмесем, портсигарсем тӑвассӗ.

Карачаровски заводра чашӑк-тирӗксем, электричество включателӗсем, патронсем, штепсельсем тӑвассӗ.

Ҫавӑн пекех Кемеровӑри, Тагилри тата ытти заводсем те пластмассӑран куллен кирлӗ япаласем туса кӑларма тытӑннӑ. (ТАСС).

ТУТАР РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ЭЛЕКТРИЧЕСТВО СТАНЦИЙӖСЕМ

Тутар республикинчи колхозсенче гидростанцисем лартас ӗҫ вӑйлӑ пырать. Качалино ялӗнче нумай пулмасть ҫавӑн пек гидростанци лартса хута янӑ. Ку станци Арск районӗнчи пилӗк колхоза электричество вӑйӗ парса тӑрать. Чи малтан ҫак станци электричество вӑйне «Авангард» колхоза панӑ.

Апастовски районри Яна-Иль колхозӗн гидростанцине лартма колхоз шефӗсем—Лунин юлташ директор пулса тӑракан заводри рабочисемпе специалистсем пулӑшнӑ. Ҫак кунсенче колхозниксен пӳрчӗсенче Ильич лампочкисем ҫунма пуҫланӑ.

Тутар республикинчи колхозсенче 1945 ҫулхи тӑваттӑмӗш кварталта мӗн пурӗ 16 ҫӗнӗ гидростанцие хута ярассӗ. Ҫав станцисене пурне те пӗчӗк юханшывсем ҫинче туса лартнӑ. (ТАСС).

РИГА ГАВАНӖНЧЕ

Рига гаваньне грузсемпе пассажирсене турттармалли тата буксир пароходӗсен караванӗ таврӑннӑ. Пӗр ҫул каярах вӗсене нимӗҫсем Ригӑран илсе кайнӑ пулнӑ. Вӗсенчен пӗр пайне Либавӑра, гитлеровецсен Курляндири ушкӑнне пӗтерсе тӑкнӑ чухне тупнӑ. Су каҫиччен вӗсене юсаса йӗркеленӗ те халӗ вӗсемпе усӑ курма тытӑнассӗ. (ТАСС).

Пропагандистсем вĕренсе тухрĕç

Республикăри парти шкулĕ çумĕнче пропагандистсен икĕ уйăхлăх курсĕ пулса иртрĕ. Унта парти райкомĕсен штатри тата штатра тăман пропагандисчĕсем, пурĕ 56 çын, вĕренсе тухрĕç.

Курсантсем ВКП(б) историне, тĕнчен политикăллă карттине тата Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине вĕреннĕ. Курсра республикăри парти шкулĕн квалификациллĕ преподавателĕсем, парти Обкомĕн ертсе пыракан работникĕсемпе лекторĕсем лекцисем вулана.

Курс хăйĕн ĕçне сентябрĕн 20-мĕшĕнче пĕтерчĕ. Юлашкинчен ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ А. С. Вишняков юлташ пропаганда ĕçĕн çывăх вăхăтри задачисем çинчен доклад туса пачĕ.

Курсран вĕренсе тухнă юлташсем парти райкомĕсенче пропагандистсем тата пуçламĕш парторганизацисем çумĕнчи политшкулсен руководителĕсем пулса ĕçлеме тытăнаççĕ.

Коммунальнăй çуртра пурнакансен воскресникĕ

Шупашкарти Аптечнăй урамри 8-мĕш номерлĕ коммунальнăй çуртра пурăнакансем иртнĕ канмалли кун хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе воскресник туса ирттерчĕç. Воскресника çурт коменданчĕ Бурашников юлташ организацилерĕ. Кашни пÿлĕмрех мăръесене тасатрĕç, çуртйĕрсене юсарĕç тата кирлĕ мар шывсемпе çÿпсене тăкмалли шăтăк турĕç.

С. МОИСЕЕВ.

Хĕле хатĕрленмеççĕ

ВĂРМАР. Хуруй ял Совечĕ хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе васкамасть. Ял исполкомĕн канцелярри кăмакисем ишĕлнĕ, кантăкĕсем те ванса пĕтнĕ, вĕсене юсас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Хĕлле хутма 30 кубометр вутă кирлĕ пулсан, паянхи куна çитсе пĕр лав та вутă турттарса хатĕрлемен. Кĕпер тума тахçанах тытăннă, анчах ăна халĕ те туса пĕтермен. Ял Совет председателĕ А. Григорьев юлташ: хальхи вăхăтра манăн ĕçлекен çынсем çитмеççĕ,—тесе ответлет. Ĕçе кирлĕ пек организацилес тĕлĕшпе тата ĕç дисциплинине çирĕплетес енĕпе хăй нимĕн те тумасть. Кĕпер хатĕр пулманни колхоза тырпул пуçтарса кĕрес ĕçре чăрмантарать. Ял совет работникĕсем канцеляринче тата ял Совет ĕçне тунă çĕрте те сахал пулаççĕ. Çакна пула финанс планне тултарасси тата государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парасси те юлса пырать.

Н. ИГНАТЬЕВ.

ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН НАУКĂПА ИСКУССТВО ДЕЯТЕЛĔСЕМ ÇИНЧЕН ÇЫРНĂ КĔНЕКЕСЕМ

Чăвашгосиздат чăваш халăхĕн наукăпа искусствине аталантарас тĕлĕшпе ĕçленĕ паллă çынсем çинчен пысăках мар уйрăм кĕнекесем кăларма тытăнать. Халĕ И. Я. Яковлев, Н. И. Ашмарин тата К. В. Иванов çинчен алçырăвĕсем хатĕрленĕ. И. Я. Яковлев çинчен Сталинла преми лауреачĕ А. И. Яковлев, Н. И. Ашмарин çинчен—В. Егоров, К. В. Иванов çинчен—И. Сутягин çырнă. Кĕнекесем иллюстрациллĕ пулаççĕ.

60 СПЕКТАКЛЬ

Чăвашсен Академиллĕ театрĕ пĕр уйăх ытла республикăн районĕсем тăрăх гастрольре çÿресе таврăнчĕ. Театр икĕ бригадăна уйăрăлса çÿренĕ—пĕр бригади Ф. П. Павловăн «Ялта» драмине, тепри К. В. Иванов поэми тăрăх çырнă «Нарспи» пьесăна кăтартнă. Икĕ бригада колхозсенче пурĕ 60 спектакль лартнă.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн ларăвĕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 20-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Болгарипе тата Румынипе тумалли мирлĕ договорăн условийĕсене пăхса тухнă.

АМЕРИКĂРИ АРМЯНСЕМ ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔСЕН СОВЕТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри армянсен наци совечĕ хаçат представителĕсене çапла каланă: эпир, Карспа Ардаган хулисене Совет Арменине таврăрса пама ыйтса, Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен Лондонри советне çыру ятăмăр. Çав çырăва директор Вертенес, председатель ĕçĕсене туса пыракан Шагинян тата секретарь Сариян алă пуснă.

Çав çырура юлашки 100 çул хушшинче туроксем армянсене мĕнле хĕсĕрлени тата вĕлерсе пыни çинчен каланă. Унта çапла каланă: «Армянсем тĕлĕшпе тĕрĕс тумалли вăхăт тахçанах çитнĕ ĕнтĕ. Эпир Турцире пулнă 1,5 миллион армяна, пĕтĕм тĕнчипе сапаланса пĕтнĕскерсене, Совет Арменине яма тата Турцин армянсем пурăннă провинцийĕсене никама пăхăнман ирĕклĕ Совет Арменийĕпе пĕрлештерме ыйтатпăр. Турци çав провинцисенчи мĕнпур армянсене ытти çĕре куçарни е вĕлерни ăна çав провинцисене хăйĕн аллинче тытса тăма ирĕк памасть. Карспа Ардаган хулисене хăйсен чăн-чăн хуçине—Совет Арменине таврăрса памалла.»

Çырура Турци Карспа Ардаган хулисене 1920 çулта туртса илни çинчен тата туроксем нумай армяна вĕлерни çинчен каланă. Америкăри армянсен совечĕ пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче Турци нейтралитет тытса тăнине питĕ хытă критикăлать.

Çырура çапла каланă: «Армянсем мĕн вăрçă пуçланнăранпах Пĕрлешнĕ нацисене вăйлă пулăшса тăнă пулсан, Турци нацистсене пысăк пулăшу парса тăнă».

Çырура малалла çапла каланă: ытти çĕрсене тарса кайнă армянсем Совет Арменине таврăниччен тата историллĕ право тăрăх армянсен пулмалли çĕрĕн чылай пысăк пайĕ ĕмĕрхи пусмăрçăн (Турцин) ури айĕнчен хăтăличчен—Турцирен тарса кайнă 1,5 миллион армян ыйтни (çав армянсене тĕнчери пĕрремĕш вăрçă хыççăн туроксем тискеррĕн тытканă), çавăн пекех тата Совет Арменийĕнче тата Совет Союзĕн ытти пайĕсенче пурăнакан 2,5 миллион армян ыйтни пурнăçа кĕнĕ тесе калама май çук. Совет Арменийĕн пĕтĕм территорийĕ 11.000 тăваткăл мильăран кăшт çеç ытларах. Вăл ют çĕршывсенчен таврăнакан армянсене вырнаçтарма юлашки 25 çул хушшинче тем пек тăрăшрĕ пулин те, 40.000 армянтан ытла вырнаçтарма пултараймасть.

Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи тата ытти вырăнсенчи армянсем Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советĕнчен армянсен тахçанхи требованине тĕрĕс те тимлĕн пăхса тухма ыйтаççĕ, вĕсем ют çĕршывсене тарса кайнă армянсем хăйсен Совет Арменийĕнчи тăванĕсемпе каллех пĕрлешессине шанса тăраççĕ».

Нумаях пулмасть Рейсинра (Висконсинра) митинг пулса иртнĕ. Çав митингра Америкăра пурăнакан 1.000 армян ытла пулнă. Çав митинг та Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советне çыру янă. Вăл çырура мĕнпур армянсене туроксем пусмăрĕнчен çăлса кăларма тата Турцири армян провинцийĕсене пурне те Совет Арменине пама ыйтнă.

Армян чиркĕвĕн Рейсинри представителĕ Калфаян. 1919 çулхи мирлĕ конференци мĕнпур армянсене туроксен аллинчен хăтарма тăрăшни çинчен астутарса, çапла каланă: «Турцири армян провинцийĕсене Совет Арменийĕ çумне хутăштарни туроксем хăваласа кăларнă 1,5 миллион армяна каялла хăйсен çĕрне таврăнма май парĕ», тенĕ.

США ÇАРĔПЕ ФЛОТĔНЧЕН ÇЫНСЕН ПĔР ПАЙНЕ КИЛЕ ЯРАССИ ÇИНЧЕН ТРУМЭН КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт çарпа флотри çынсен пĕр пайне киле ярасси çинчен Трумэн президентăн заявленине пичетлесе кăларнă. Çав çынсене пурте часрах киле ярасшăн, тенĕ Трумэн, анчах та «киле ярас хăвăртлăх пирĕн малашне оккупаци çарĕсем валли тата ытти çарсем валли мĕн чухлĕ çын кирлинчен килет тени тĕрĕс пулмасть. Хальхи вăхăтра çав çарсем валли мĕн чухлĕ çын кирлине никам та тĕрĕс каласа пама пултараймасть. Ун пирки эпир ĕлĕкрех шухăшланине тăтăшах сĕнĕрен пăхса тухатпăр», тенĕ Трумэн.

Трумэн малалла çапла каланă: Макартур каланă тăрăх, ăна 200.000 çын кирлĕ. Оккупаци çарĕсен йышне сăркуннене палăртĕç. 1945 çулхи раштав кунĕ тĕлне çартан 2 миллион çынна ытла киле яма хатĕрленеççĕ. Раштав кунĕ çитиччен çартан кашни кун ытларах та ытларах çынна киле ярса пырĕç; куллен киле яракансен хисепĕ раштав кунĕ тĕлне 15.000 çынтан 22.000 çынна çитмелле, январь уйăхĕ тĕлне вара 25.000 çынтан та иртмелле.

Трумэн малалла çапла каланă: «çарпа флот хăйсен задачисене чи сахал йышлă çынпах пурнăçласа пырĕç. Америка хăйĕн хăватне сыхласа хăварĕ, çав хăват ăна хăйĕн наци обязательствисене пурнăçа кĕртме кирлĕ. Ытти çынсене çарпа флотран киле ярса пырĕç».

НЬЮ-ЙОРКРА ПУЛСА ИРТНĔ МАССĂЛЛА МИТИНГ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Медисон Сквер Гарденра Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи коммунистсен партийĕ 26 çул тултарнă май массăллă митинг пулса иртнĕ. Митингра 18 пин çынна яхăн пулнă.

Митингра коммунистсен партийĕн наци совечĕн председателĕ Фостер тата ытти ораторсем те сăмах тухса каланă. Вĕсем Тегеранра, Ялтăра тата Сан-Францискăра йышăннă аслă демократи принципĕсене Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче пурнăçа кĕртме ыйтнă.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен монополисчĕсем фашизма пулăшса пыма тăрăшнине тата тĕнчери мирлĕ пурнăçа хавшатма хăтланнине чарса лартма тивĕçлĕ, тенĕ. Халăх вĕсем çапла каланине тăвăллăн алă çупса йышăннă. Фостер уйрăмах Америкăри реакционерсем гĕнчере пуç пулса тăрас тата тĕнчери халăхсене демократиллĕ çĕнтерÿсĕр тăратса хăварас ĕçре Пĕрлешÿллĕ Штатсен хăвачĕпе усă курма тăрăшнине сивленĕ.

Çавăн пекех митинг çапла йышăннă: Трумэнпа Бирнс фашизма хирĕç кĕрешекен Испани çыннисене Альвареспа Сапирейăна çăлса хăварас ĕçе халех хутшăнччăр, тенĕ.

АВСТРИРИ ФАШИСТСЕН ТИСКЕР ĔÇĔСЕМ

ВЕНА, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Вена ратуши нацисен террорĕн тискер ĕçĕсем çинчен калакан материалсем пухать. Малтанласа пĕлтернĕ тăрăх, фашистсем пуçпулса тăнă вăхăтра Венăра 75.000 çынна сиен кÿнĕ. Вĕсенчен 8.000 çынна яхăн каторга тĕрмисенче тата концентраци лагерĕсенче пулнă. Гитлеровецсем 1.205 çынна вĕлернĕ. Ку хисепе Венăран вĕлерме илсе тухса кайнă 46.500 еврей кĕмест. Халĕ Вена хулине гитлеровецсен концентраци лагерĕсенчен ирĕке кăларнă çынсем кашни кунах килсе тăраççĕ.

Германири Контроль Совечĕн 6-мĕш ларăвĕ çинчен пĕлтерни

БЕРЛИН, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 20-мĕшĕнче Берлинра Контроль Совечĕн улттăмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва фельдмаршал Монтгомери председатель пулса ертсе пынă. Ларура Совет Союзĕн представителĕ арми генералĕ Соколовский, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен представителĕ арми генералĕ Эйзенхауэр, Франци представителĕ Кельц генерал пулнă.

Контроль Совечĕ Германи валли таварсем кÿрес тата Германирен таварсем ăсатас ыйтăва пăхса тухнă, вара Совет çав тĕлĕшпе пĕр политика тытса пыма йышăннă.

Контроль Совечĕпе Координаци Комитечĕ законсем кăларас тĕлĕшпе мĕнле формăпа ĕçлесси çинчен калаçса татăлнă. Контроль Совечĕпе комендатура чĕнсе каланисене, законсене, приказсене, директивăсене тата инструкцисене вырăс, акăлчан, франпуз чĕлхисемпе пичетлесе кăларма йышăннă. Кирлĕ пулсан, вĕсене нимĕçле куçарса та пичетлемелле.

Пĕтĕм Германири нимĕç халăхне мĕн май килнĕ таран пĕр пек тыткалас йĕркене пурнăçа кĕртес тесе, оккупациленĕ тăватă держава хăйсен зонинче кăларакан законсен копийĕсене пĕр-пĕрин патне ярса тăма килĕшнĕ, çавăн пекех тата пĕр-пĕрне çав тĕлĕшпе информаци парса тăма йышăннă.

Германире çар ĕçне вĕрентессине чарса лартас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен калаçса татăлнă, вăл тĕлĕшпе йышăннă приказа каярахпа пичетлесе кăлараççĕ.

Контроль Совечĕ фашистла нимĕç законĕсене пурне те пăрахăçа кăларасси çинчен калакан постановление алă пуснă. Вăл постановление официальнăй йĕркепе пичетлесе кăларĕç.

Германи халăхне ун умне çĕнĕрен хăшпĕр требованисем кăларса тăратни çинчен пĕлтерме йышăннă.

Нимĕç халăхĕпе çыхăнас ыйту тĕлĕшпе çакăн пек калаçса татăлнă: Британи, Америка тата Франци зонисенче халăхи правилăсене кăштах çемçетмелле. Çав йĕркепе çырнă приказсене кашни зонăра командующисем кăлараççĕ. Совет зонинче нимĕç халăхĕпе çыхăнма чаракан правилăсем çук, çавăнпа та малта асăннă решени Совет зонине тивмест.

СОЮЗНИКСЕН БЕРЛИН КОМЕНДАТУРИН 11-мĕш ЛАРĂВĔ

БЕРЛИН, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС) Паян Акăлчан коменданчĕ Нейрс генерал-майор председатель пулнипе союзниксен Берлин комендатурин 11-мĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

Комендантсем 1945 çулхи сентябрĕн 23-мĕшĕнче Берлин хулинчи сехет стрелкине куçарма килĕшнĕ. Çав кун çурçĕр иртсен 2 сехетре сехет стрелкине пĕр сехет каялла куçараççĕ.

Хулан финанс планне çирĕплетнĕ. Плана магистратурăн финанс отделĕн положенийĕ çинчен калакан директивăсене, Берлин хулинчи банк çинчен калакан положение тата доходсемпе расходсем тĕлĕшпе ĕçлекен нимĕç чиновникĕсем валли туса хатĕрленĕ инструкцие кĕртнĕ.

Комендантсем Берлин хулин магистрачĕ Берлинри протестантсемпе католиксен прихочĕсене валли уйрăм статьясем тăрăх укçа-тенкĕ уйăрса пама сĕннине ырланă. Чиркÿ çурчĕсене юсама 550.000 рейхсмарка пама килĕшнĕ.

Берлинри полици ĕçĕн хăшпĕр ыйтăвĕсене сÿтсе-явнă. Полици командисене, пурнинчен ытларах канцелярисенче ĕçлеме полици органне хĕрарăмсене ĕçе илме ирĕк панă. Охраннăй полици (шутполицай) аллине алтуйисем памалла тунă. Обер-бургомистра полицейскисене вĕрентсе хатĕрлеме шкулсем уçма кăтарту панă.

Берлинри халăха Мăн Берлин ăшĕнче телеграфпа усă курма ирĕк панă, çавăн пекех тата почта уйрăмĕсенче телефон станцийĕсем уçма йышăннă.

Комендантсем нимĕçсен чугун çулĕсене 1945 çулхи сентябрь уйăхĕнче ĕçлетерме 19 миллион рейхсмарка хушса пама килĕшнĕ.

ПЕРЕМИРИ КИЛĔШĔВНЕ АЛĂ ПУСНĂРАНПА ÇУЛТАЛĂК ÇИТНĔ КУН ХЕЛЬСИНКИРЕ ПУЛСА ИРТНĔ ПУХУ

ХЕЛЬСИНКИ, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 19-мĕшĕнче Финляндин государство совечĕ перемири килĕшĕвне алă пуснăранпа çулталăк çитнĕ ятпа Мессухалли çуртĕнче чаплă пуху туса ирттернĕ. Пухура çаксем пулнă: премьер-министр Паасикиви тата правительство членĕсем, Союзниксен Контроль Комиссийĕн Председателĕ А. А. Жданов генерал-полковник, Союзниксен Контроль Комиссийĕн ответлă сотрудникĕсем, дипломати корпусĕ, çав шутра Совет Союзĕн Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посланникĕ Орлов, общественность, наука тата литература представителĕсем, Финлянди çарĕн представителĕсем тата журналистсем.

Чаплă ларăва уçнă чухне оборона министрĕ Мауно Пеккала Совет Союзĕ Финлянди тĕлĕшпе ырă кăмăллă пулнине палăртнă, Совет Союзне хирĕç пыракан политикăна татăклăн сивлеме кирлине кăтартнă, çакна кирлĕ ĕçсемпе çирĕплетсе пама чĕннĕ.

Финанс министрĕ Торнгрен швед чĕлхипе кĕске сăмах каланă. Унтан премьер-министр Паасикиви сăмах тухса каланă.

ТЕГЕРАНРА ПОЛИЦИ ТУНĂ ТИСКЕРЛĔХСЕМПЕ ТЕРРОР

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 17-мĕшĕ (ТАСС). (Вăхăтра çитереймен). Тегеранри Фердоуси урамĕнче, халăх партийĕпе профсоюзсен клубĕсем тĕлĕнче салтаксем, полицейскисемпе жандармсем питĕ нумай. Икĕ кун хушши ĕнтĕ нумай урамсенчи магазинсене чылай иртерех хупаççĕ. Тегеранри телеграфа, электричество, радио, телефон станцийĕсене тата нумай фабрикăсене салтаксемпе жандармсем йышăнса илнĕ. Вĕсем рабочисем мĕнле ĕçленине, хăйсене хăйсем мĕнле тыткаланине тĕрĕслесе тăраççĕ.

Ĕнер 6 сехетре каçхине урамра Иранри паллă пичет деятельне меджлис депутатне Кешаварз доктора питĕ хытă хĕненĕ. Вăл патруль патĕнчен иртсе пынă чухне ăна тахçин ятпа чĕнсе илнĕ. Çакăншăн вара ăна Иран çарĕн майорĕ Зариналь тытса чарнă. Çавăнтах салтаксемпе жандармсем 15 çынна яхăн пырса тухнă. Кешаварз депутата хупăласа илнĕ. Унран пĕтĕмпе те: «эсĕ кам?» тесе кăна ыйтнă. Кешаварз хăйĕн ятне каласа, хăй меджлис депутачĕ пулни çинчен пĕлтернĕ. Çакăн хыççăн ăна тискеррĕн хĕнеме тытăннă. Зариналь майор депутата револьвер аврипе пуçран хĕненĕ, салтаксемпе жандармсем ăна чышкăпа тата прикладпа хĕненĕ. Пĕтĕмпех юнланса пĕтнĕ депутата Кешаварз доктора, тăнне çухатнăскере, киле илсе таврăннă.

«Набард» хаçатра çапла çырнă: пĕр урамра виçĕ хĕрарăма питĕ хытă хĕненĕ.

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). (Вăхăтра çитереймен). Иранри хаçатсенче Тегеранра пулса иртнĕ юлашки событисем çинчен питĕ нумай çыраççĕ.

«Растехизе Иран» хаçатра çав событисем çинчен уместатья çырнă. Унта сулахай хаçатсене хупнишĕн, редакторсене арестленишĕн, пухусене чарнишĕн тата демократиллĕ организацисене салатса янишĕн тарăхни çинчен пĕлтернĕ.

«Парвариш» («Дад») хаçатра жандармсем хĕспăшалсăр çынсене тапăнни çинчен çырнă.

«Дарья» хаçатра çырнă тăрăх, çĕршыва тытса тăракан çынсен халăхăн тивĕçлĕ требованийĕсене хирĕç мерăсем йышăнас вырăнне, çав требованисене пурнăçа кĕртмелле, çапла вара капланса килекен катастрофăна сирсе ямалла.

«Койхан» хаçатра çĕршыври йывăр тару-тăру çинчен тĕплĕн каласа парса, çав тару-тăрун результачĕсем питĕ лайăх мар пуласси çинчен шаха асăрхаттарнă.

ВЕНГРИРЕ ЭСЭСОВЕЦСЕМ ПУЛНĂ ÇЫНСЕНЕ АРЕСТЛЕНИ

БУДАПЕШТ, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Сабад неп» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Венгри полицийĕ Пер Бал ялĕнче (Мăн Будапешт районĕнче) ухтару туса ирттернĕ. Çак ухтарура полицин 200 сотрудникĕ пулнă. Документсене тĕрĕсленĕ май, эсэсовецсем пулнă 158 çынна арестленĕ.

ВАЛЬТЕР ШМИДТА ÇАКСА ВĔЛЕРНĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Прага хулинчи суд вĕлермелле тунă паллă гитлеровеца, СС пуçлăхĕсенчен пĕрри пулнă Вальтер Шмидта çакса вĕлернĕ. Çав Шмидт темиçе концентрациллĕ лагерĕн инспекторĕ пулса ĕçленĕ. Вăл Равенсбрук лагерĕнче союзниксен çыннисене хытă асаплантарнă, унта чехсен 100 тĕрарăмне вĕлернĕ.

Пĕчĕк фельетон

Ватă лаша опычĕ

Ватă çын—тăватă çын, тенĕ ĕлĕк ваттисем. Ку ĕнтĕ, этем пирки калаçан, тĕрĕсех те пуль. Анчах лашана илсен вара, ватă лаша ниепле те тăватă лаша пулма пултараймасть. Ку чăнлăха пĕчĕк ача та пĕлет темелле. Куславкка районĕнчи Андреев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ П. Н. Глебов çеç ăна пĕлмене перет. Тĕрĕссипе вăл та пĕлет теха... Анчах вăл мĕскер ытларах пĕлнине тавçăрса илес пулать.

Çапла Глебов колхозăн 3 çулхи «Малютка» ятлă кĕсрине Мари республикинчи Чăваш Утăр ялĕнче пурăнакан пĕр единоличникĕн 30 çулхи «Случайнăй» ятлă лашипе улăштарса ярать.

— Çамрăк кĕсрен мĕн усси! Кашни çул хăмлаттармалла, лайăххăн ĕçлеме те çук. Ватă лаша ĕçре шанчăклă, опыт пур,—çапларах, тен урăхларах сăмахсемпе ăнлантарса пама тăрăшать Глебов хăйĕн ĕçне.

«Случайнăй» лаша, единоличник аллинче вăрăм ĕмĕр пурăнса ирттерсе нумай хĕн-хур тÿснине кура, Глебов ăна, халĕ колхоза кĕнĕ ятпа, ултă уйăхлăха канма тăратать.

Ку председателĕн чĕри лашашăн ан силе сунать те, колхозниксемшĕн çунни пирки мĕн каласси пур!..

Акă пăхăр-ха! Хайхи единоличник «Малютка» ятлă лашашăн колхоза хушса тÿлес вырăнне Глебовпа унăн пиччĕшĕ валли пÿрт лартмалăх йывăç пĕр пуссăрах турттарса парать. Единоличник хăйĕн пулса тăнă çамрăк кĕсрепе ĕçлет, колхозăн пулса тăнă ватă «Случайнăй» лаша «кану витинче» тăрать. Шăлĕ çук пирки вăл утă-улăм çиме пултараймасть, ăна çемçерех те тутлăрах апат пар!

Анчах Глебова унта-кунта, çын умне тухса çÿреме пĕрер хÿхĕм лаша кирлĕ. Шăлсăр «Случайнăй» лашапа инçех каяйман, тата унашкал хăлтăр-халтăрпа пуçлăха ларса çÿреме те килĕшÿллех мар. Вара Глебов, никампа килĕштермесĕр, хăй тĕллĕнех колхозăн 78 пăт тырпине парса, «Женя» ятлă 3 çулхи кĕсре илет. «Женя» ячĕ пуçлăха питĕ кăмăла кайнă пулас?!.

Çав «Женьăчкăпа» Карачри ялпо председателĕ Александров та çÿреме юратнă. Пĕринче çапла Александров унпала хăнана кайнă. «Лайăх та лаша пуçне ухлать инçе çула кĕске тăвасшăн», тесе юрланă вăл хĕренкĕ пуçĕпе. Хăй вара çамрăк лашана арçурилле хăваланă. Мĕн тетĕр эсир,—«Женя» çакăн пек «ака-туй» хыççăн юрăхсăра тухнă.

«Случайнăй» лаша та Глебова часах йăлăхтарса çитернĕ. Чăн та ватă лашан «опычĕ» пысăк, анчах шăлсăрскер апат та çиеймест, ĕçлеме те пултараймасть.

Глебов вара ăçа 35 кубометр йывăçпа улăштарса ярать. çиелтен колхозăн 100 пăт уттине тата—сÿсменĕ-йĕнерчĕкĕ, йĕвенĕ-тилхепи—пĕтĕмпех пĕрле парса ярать. Таси паха!

Çапла вара Глебов туса ирттернĕ «ватă лаша опычĕ» колхоза питĕ хакла ларать. Мĕн каласси пур ĕнтĕ çакăн хыççăн Глебов колхозшăн тăрăшмасть тесе? Нимĕн каласси те çук! Мĕншĕн тесен, унăн ĕçĕ мĕн каламаллине пĕтĕмпех каласа парать.

Колхозниксем хăйсем хушшинче:

— Лаша «Случайнăй» ятлă пулни мар, пирĕн председателĕ случайнăй çын пулни айăплă,—тесе калаçаççĕ.

Анчах колхоз пурлăхне çавăн пек нимĕн намăса пĕлмесĕр салатакан пуçлăхăн «опычĕсем» пирки Куславкка районĕнчи прокурор интересленсе пăхассине шанас килет. Ахаллĕн Глебов, «пирĕн урам анаталла» юрра юрласа пырса, колхоз хуçалăхне пĕтĕмпех аялаллах шутарса яма пултарать. «Пуçтарма—ĕмĕрлĕх, салатма—виç кунлăх», тенĕ ваттисем...

В. АКЧЕЛЬ.

ÇĔНĔ УЧЕБНИКСЕМ

Пичетрен чăваш шкулĕсене валли А. Т. Трофимовпа М. Я. Сироткин çырнă вырăсла букварь тата Н. С. Поповăн пĕрремĕш класс валли «Арифметика задачисемпе упражненисен кĕнеки» тухрĕç. Союзпечать тата КОГИЗ вĕсене районсене яраççĕ.

ЛЕНИН ÇИНЧЕН ÇЫРНĂ КАЛАВСЕМ

Чăвашсен государство издательстви вырăссен писателĕ А. Кононовăн «Ленин çинчен» ятлă калавсен кĕнекине кăларать. Кĕнекере пурĕ 20 калав ытла, калавсене ÿкерчĕксемпе илемлетнĕ. Чăвашла вĕсене К. Чулкаç куçарнă.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

СССР Тинĕс флочĕн Сĕнтĕрвăрринчи 4-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ судостроитель тата плотник пулма вĕренме илет.

Шкула 16—17 çула çитнĕ арçын ачасене илеççĕ.

ФЗО шкулне вĕренме кĕнисене судоверфьри рабочисен нормипе кунне виçĕ хут апатлантараççĕ, общежитие вырнаçтараççĕ, выртса-тăмалли вырăн параççĕ. Вĕренекенсене пурне те Тинĕс флотĕнчи çынсен формине тăхăнтараççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен çак адреспа заявлени ямалла: гор. Мариинский Посад, ЧАССР, Верхне-Волжская улица, 12.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, 2) сывлăх мĕнлине кăтартакан справка, 3) ăста миçе çул вĕреннине кăтартакан справка.

Силос ытларах хывса хăварар

Силос хĕллехи вăхăтра выльăхсене çитермелли чи паха сĕткенлĕ апатсенчен пĕрри пулса тăрать. Силос уссине халĕ пурте пĕлеççĕ. Хире силос валли акса тунă тата хăй тĕллĕн ÿсекен курăксене силоса хывсан, унăн пахалăхĕ те, выльăха кирлĕ япалисем те ытларах сыхланса юлаççĕ. Лайăх силос выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерет, çамрăк выльăхсене хăвăртрах çитĕнме тата тĕреклеме май парать.

Ипрĕн республикăри нумай колхозсем кăçал силос хывмалли плана тырпул пухса кĕртме тытăничченех тултарчĕç. Анчах кашни районрах силос хывса тултарман уйрăм колхозсем те сахал мар-ха. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ йышăннă тăрăх, колхозри кашни лаша пуçне 0,5 тонна, ĕне пуçне 5—6 тонна, майракаллă шултăра çамрăк выльăх пуçне 1 тонна, сысна ăшне суринсем валли 2 тонна силос хывса хăвармалла. Хĕрлĕ Чутай, Куванино, Октябрьски, Шупашкар, Етĕрне тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсем сÿлерех асăннă норма тăрăх силос хывса çитереймен-ха. Плана тултарнă колхозсен те эпир плана тултарнă тесе лăпланса ларма та мар. Халĕ силос хывмалли пайсем ытла та нумай. Колхозсенче кăсал çанталăк сĕтĕрлĕ кăларма тытăнаççĕ. Кăçал çанталăк сумăрлă пулнине кура çĕрулми питĕ пайлă. Вĕсене силос хывнă çĕре ямалла. Çĕрулми аврине 10—15 сантиметр тăршшĕ вакласа хывмалла, симĕс çĕрулми аврине пĕр колхозра та сая ямалла мар. Тымарçимĕç çулçипе тата купăста çулçипе те силос хывас ĕçре усă курмалла. Вĕсене шăтăка вакламасăрах е тимĕр кĕреçепе кăшт вакласа хума юрать. Çак япаласен сĕтекĕ пысăккине шута илсе арпапа, ыраш пучахĕпе е итем çинчи ытти вак улăмсемпе хутăштарса хурсан та аван. Купăста тата пахчаçимĕç çулçисемпе хутăштарса хуракан арпапа е улăма йĕпетсе хумалла. Вăрмансенче, сырма-çатрасенче курăксем тепĕр хут ÿссе çитĕннĕ тĕслĕхсем те нумай, вĕсене çулса типĕтме май пулмасан, пĕтĕмпех силоса хывмалла. Клевер, люцерна тата ытти курăксен каювĕсене те çулса силоса ямалла. Çак паха выльăх апачĕсене хĕллене хатĕрлес тесе, пур тĕлте те вăхăтăн усă курмалла. Уйран, пахчасенчен силослăх курăксене вакăрсемпе, кÿлме вăрăптнă ĕнесемпе ферма сурчĕсен çывăхне турттарса силоса хывмалла. Силос хывас ĕçре ферма работникĕсен пиченерех ĕçлемелле, мĕншĕн тесен выльăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апат ытларах хатĕрлесси чи малтанах вĕсен задачи пулса тăрать.

Силос лайăх пахалăхне çухатмасăр сыхланса тăтăр тата унпа кирек хăçан та усă курма май пултăр тесен, силос хывас ĕçе правилăсене пăхăнса тумалла. Шăтăк стенисене ишĕлсе силос массине хутшăнмалла мар тăвас пулать. Шăтăка сумăр шывĕ ан кайтăр тесе, шăтăк гавра канав алтса çаврăнмалла. Силос шăтăкĕ шыв пухăнса тăракан лапам вырăнта пулмалла мар. Шăтăкăн çÿлти пайĕ пысăкрах, тĕпĕ пĕчĕкрех пулмалла. Силос шăтăкне хĕлле юр айĕнче те тупма çăмăл пултăр тесе, паллă туса хумалла.

Чылай колхозсенче силос хывсан ăна тĕрĕс шута илмеççĕ, час-часах «куçпа виççе» вăтам шутпа çырса хураççĕ. Çавна май районри çĕрĕç пайне паракан сведенисем те тĕрĕс пулмаççĕ. Çĕмĕрле районĕнчи «Красный Октябрь» колхозра силос массине мĕн чухлĕ хывнине шутлама пĕлмен пирки «вăтамран» 200 тонна хыврăмăр тесе районри çĕрĕç пайне пĕлтернĕ, хăйсем вара плана тултартăмăр тесе лăпланса ларнă. Силос шăтăкĕн пысăкăшне хăйсем каласа панă тăрăх шутласа пăхсан, шăтăкра пурĕ те 105 тоннăна яхăн çеç силос хывни курăннă. Çакăн пек тĕслĕхсене ытти районсенчи колхозсенче те тĕл пулма пулать. Силос хывса çитерейнисĕр лăпланса ларни, е силослăх япаласем пур çĕртех силос хывманни пикамшăн та усăллă марри пуриншĕн те паллă. Кĕркунне выльăх апачĕн балансне тунă чухне силоса тĕрĕс мар шутлани ĕçе питĕ кансĕрлет, çавна май час-часах выльăх апачĕ çителĕксĕр пулать. Çавăнпа та силос хывнă шăтăка е траншейăна мĕн чухлĕ силос вырнаçнине тĕрĕс шутлама пĕлмелле.

Силос шăтăкне виçесен тата унта мĕн чухлĕ силос кĕнине пĕлесси йывăр мар. Пĕр кубометра вăтам шутпа 6 центнер силос каять. Çаврака шăтăкăн пысăкăшне пĕлес тесен, шăтăкăн çÿлти тата тĕпри урлăшне виçмелле. Икĕ виçине пĕрле хушса 4 çине пайламалла. Унтан ăна хăй çине хутламалла. Унăн произведенине улăшман коэфициент 3,14 çине хутламалла. Çакна вара шăтăк тарăнăшĕ çине хутламалла. Çакăн хыççăн пулакан цифра шăтăк калăпăшĕ пулать.

Траншейăна (тăрăхла шăтăксене) виçесси татах та ансатрах. Çиелти тата тĕпри урлăшне виçсе пĕрле хушмалла та суммăна çурмалла пайламалла. Çапла вара шăтăкăн вăтам урлăшне пĕлетпĕр. Ун хыççăн тăршшĕне виçсе ăна урлăшĕ çине хутламалла. Шăтăкăн тарăнăшне виçсе ăна урлăшĕне тăршшĕн произведенийĕ çине хутламалла. Çапла тусан, шăтăкăн пысăкăшĕ миçе кубометр пулнине пулать.

Силос шăтăкĕн е траншейăн пысăкăшне районри е участокри зоотехниксен кашни колхозрах шутласа мĕн чухлĕ силос хывнине тĕрĕс каласа памалла. Зоотехниксемпе ялхуçалăх специалисчĕсен халĕ кашни колхозрах силос хывас ĕçе малалла туса пырассишĕн тăрăшмалла. Ферма работникĕсен выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе пикенерех ĕçлемелле.

Колхозри выльăх-чĕрлĕх ĕççе пытăр, унăн тухăçлăхĕ пысăкрах пултăр тесен, ытларах выльăх апачĕ хатĕрлессишĕн кашни колхозра пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Ф. ЯКОВЛЕВ,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн зоотехникĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Солодарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00033 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. з. 35 42 л. л Тираж 15.000 экз.